# Сувар

Тутарстан Республикинчи чăвашсен обществăпа политика хаçачĕ

*Н.В.Никольский ячĕллĕ преми лауреачĕ (2008),
хаçата Чăваш халăх ăсхакăлпа ÿнер академийĕн
Н.В.Никольский ячĕллĕ орденĕпе наградăланă (2013)*

21№ (1572), эрнекун, çу (май) уйăхĕн 31-мĕшĕ, 2024 çул




ХАЛĂХ УЯВĔСЕМ




*П.Яркунов сăнÿкерчĕкĕ.*

# «КАРАВОН» 20 ПИН ÇЫННА ПУÇТАРЧĔ

## Майăн 26-мĕшĕнче Лайăш районĕнчи Никольски ялĕнче вырăс халăх культурин уявĕ иртрĕ

**Çуллахи Микулана халалланă уявра алран алла тытăнса утасси те, çемье çавăрас текен каччăсем хĕр сăнаса хуни те, ытти йăласем те нумай пулнă. Коммунизм патне васканă тапхăрта, чăрмантарасран хăраса-ши, авалтан пыракан халăх йăлисене, уявĕсене манăçа хăварма ăнтăлнă. «Каравонпа» та çакăн пек ăнсăрт пулса иртнĕ.**

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)


ÇЫРĂНТАРУ – 2024

**Акци: 6 уйăха «Сувар» çырăн та 10 кăвакал чĕппи выляса ил!**



Хăçана çырăнмалла? ➤ 2024 çулăн 2-мĕш çур çулĕ валли

Ăçта? ➤ Сыхăну уйрăмĕсенче е Раççей Почтин podpiska.pochta.ru сайчĕ урлă

Индекс Тутарстанра П2340, Раççейĕн ытти регионĕсенче П7093

Тĕплĕнрех suvargazeta.ru

*Чăваш пулар, пĕрле утар!*

Реклама АО «ТАТМЕДИА»





*Елабуга чăвашĕсем Н.Липатов яла куçнăран çĕнĕ ертÿçĕ шыраççĕ.*

*2 стр.*




*Леонтьевсем Сочире паллă спортсменсенчен автограф илнĕ.*

*5 стр.*

Ытти хыпарсемпе хаçатăн suvargazeta.ru сайтĕнче паллашма пулать

podpiska.pochta.ru

ПИРĔН ХĂНА

## ÇИТТА МИККУЛЬ:

# «КУПĂС МАНШĂН ЧИ ÇЫВĂХ ЮЛТАШ»



**Чăвашла юрлакансен хушшинче çирĕп утăмсемпе малалла талпăнакан тепĕр çĕнĕ çăлтăр çуталчĕ. Паян сире Николай Сидоровпа паллаштарас килет. Ялĕ вăрман çумĕнче вырнаçнăран шăпчăксем юрланине итленипе-ши хăй те юрлама тытăннă. Паян та купăсне тăсса юрăсем шăрантарать. Унпа социаллă тетел урлă çыхăнса пултарулăхĕ пирки ыйтса пĕлтĕм. Хаваспах килĕшрĕ çамрăк купăсçă вулакансене хăйĕнпе паллаштарма, çунатлă ĕмĕчĕсем çинчен пĕлтерме.**

**– Николай, хăвăнпа паллаштар-ха, хăш районта çуралса ўснĕ эсĕ, ăçта ĕçлетĕн, çемьеллĕ-и?**

– Эпĕ Чăваш Енри Шăмăршă округĕнчи Карапай-Шăмăршă ялĕнче çуралса ўснĕ, хĕсметрен таврăнсанах атте хăйпе пĕрле шапаша илсе çўрерĕ, атте халь тивĕçлĕ канура. Хам вара стройка енĕпе Çырчалли хулинче ĕçлетĕп.

**– Сцена çинчи хушма ятна хăв суйларăн-и?**

– Асаттене те Çитта Миккулĕ тенĕ пирĕн, çавăнпа хама та çак ята суйлама килĕшрĕ.

**– Юрлама ăçта вĕрентĕн?**

– Юрлама ниçта та вĕренмен, хам тĕллĕн çеç. Шкулта вĕреннĕ вăхăтсенче музыка урокĕсенче юрлакалана ĕнтĕ. Каласа хăварам, юрăсем юрламашкăн хамăр ялти юлташ Коля Козлов шухăш пачĕ. Юрă çырса юрлама кăмăлсем çук-и терĕ? Мĕншĕн юрлас мар? Атя, юрлатăп терĕм! Вăл мана çавнашкал пĕрремĕш сĕнў пачĕ, кирлĕ çынпа паллаштарчĕ. Тав тăватăп ăна.

**– Хуткупăспа калама кам вĕрентрĕ?**

– Купăс калама никам та вĕрентмен мана. Икĕ çул çурă каялла кĕвĕсем итлесе, чухласа хам тĕллĕн вĕрентĕм. Малтан питех лайăххах калаймастăмччĕ. Анне икĕ çул каялла çĕре кĕнĕ хыççăн хитререх пула пуçларĕ, яланах ун ячĕпе юрăсем юрлаттăм. Килте халь те юрлатăп Сергей Кувшиновăн «Ах, аннеçĕм, анне» юррине. Каярахпа аннене халалласа юрă кăлартăм «Аннеçĕм, анне...»

**– Мĕншĕн аккордеон е баян мар, купăс суйларăн?**

– Купăс – меллĕ инструмент, пĕтĕм çĕрте калама пулать, ман вăл яланах хампа пĕрле, машинăрах çўрет. Купăс маншăн чи çывăх юлташ та. Хама эп чаплă купăсçă тесе хальлĕхе калаймастăп, вĕренетĕп.

**– Хальхи саманара вăйçă пулса туйсене йыхравлаççĕ-и? Купăс кĕвви илтĕнни чуна савăнтарать...**

– Юбилейсене чĕнкелеççĕ ĕнтĕ, пушă чух хирĕçлеместĕп. Чăваш кĕввисемпе ташлаттаратăп, юрлаттаратăп хăнасене. Савăнчăк тетĕп, ара. «Купăс сасси – чун уççи» темен-иха? Юбилейсене чĕннĕ чух малтан вăтанкалаттăм, халь ĕнтĕ хăнăхрăм, хама лăпкăрах тытатăп. Пурте хамăр çынсем тесе шутлатăп та хуткупăса тăсса такмаксем каласа ташлаттарма тытăнатăп. Халăх санпа пĕрле юрласан вара тата хавхаланса купăс калас килет.

**– Музыкăпа туслисем, тен, йăхрах пулнă сирĕн?**

– Пирĕн йăхра иккĕмĕш сыпăкри пиччепе унăн шăллĕ купăс ăста калаççĕ. Ял çыннисен сăмахĕ тăрăх, асатте вылякаланине те илтнĕ вĕсем тата анне хĕр чухне купăс каланă пулнă.

**– «Музыкăсăр пурнăç çук» тени тĕрĕс апла?**

– Музыка вăл ман чуна уçать, чунри пушă вырăнсене тултарать, кăмăла уçать. Анне ĕмĕрлĕхех пурнăçран уйрăлса кайнă хыççăн алла купăс илеттĕм те кунĕпе ларма пултараттăм, чун лăпланиччен. Куçран куççуль тухатчĕ унăн ячĕпе юрланă чух. Пĕрре вара анне тĕлĕке кĕчĕ те: «Коля, эс купăс каласа юрланă «Ах, аннеçĕм, анне...» юрруна кунĕпе итлерĕм», – терĕ те вăранса кайрăм. Питĕ йывăр пулчĕ маншăн вăл çул.

**– Юррусене малтан хак паракан пур-и?**

– Юррăмсене юлташсем, тăвансем, ялти çынсем чăн малтан итлеççĕ. Эпĕ вĕт хама валли, чуна йăпатмашкăн тесе кăна юрлама шут тытнăччĕ. Каярахпа ялйыш та итлесе савăнтăр терĕм. Килĕштерекенни килĕштерет, итлекенни итлет, чи кирли – чунтан юрлани.

**– Мĕнле йышăнаççĕ итлекенсем?**

– Эп купăс каласа юрланине килĕштереççĕ, чун ыйтнипе юрлатăп-çке. Çавнашкал пуçланчĕ, халĕ халăха та килĕшет пек.

**– Гитарăпа калама кам вĕрентрĕ?**

– Гитарăпа эпĕ салтакра чухне вĕрентĕм. Салтакран таврăнсан та гитара нумай каланă, кайран купăспа вĕрентĕм те ăна ытлашши тытсах кайман. Гитара та мана килĕшекен инструмент, вăхăтĕнче юлташсемпе пĕрле пуçтарăнса тĕрлĕ юрăсем юрлаттăмăр.

**– Тен, тата ытти музыка инструменчĕпе калама вĕренес килет?**

– Хальлĕхе гитара тата купăс ман юратнă инструментсем.

**– Малашнехи плансем мĕнле?**

– Малашнехи плансене хальлĕхе хам та пĕлместĕп. Халь ĕçлетĕп-ха, пушă вăхăтсенче купăс каласа юрлатăп. Ĕмĕтсем ман тата лайăххах купăс каласси. Пĕчĕккĕн пулса пырать пек. Эп хам юрлама ытлашши пĕлсех каймастăп пулин те, чун ыйтать. Вокал енĕпе пĕлў илме кăмăл пур, сасса уçмашкăн малалла вĕренмелле. Тен, пурăна-киле Шупашкар сцени çине те тухăп *(кулать)*. Питĕ юрлас, вĕренес килет.

**– Мĕнле музыкăна кăмăллатăн, итлетĕн? Пилĕк юрă санăн, мĕн çинчен вĕсем?**

– Чуна пыракан юрăсем итлетĕп, пурнăçпа çыхăннисене. Ман юрăсем хамăн пурнăçран илнисем тесен те юрать.

**– Юрăсем хăв та çыратăн-и?**

– Тĕпрен илсен, Юрий Кашкăр çырса панисем, хам та пĕр юрă çыртăм, хавхалану килчĕ те. Вăл юрра та итлекен патне çитерессшĕн. Хак парасса шанатăп. Ĕç хыççăн яланах уй-хире тухатăп, май пулсан чуна йăпатмашкăн, тунсăх чух кăмăла уçмашкăн çĕнĕ юрăсем вĕренме.

**– Пĕрремĕш хут сцена çине тухсан мĕнле туйрăн хăвна, пăлханнине епле ирттертĕн?**

– Пĕррехинче хăйсемпе пĕрле концерт лартмашкăн ялти клуб заведующийĕ Алина Алексеева илсе кайрĕ. Пĕрремĕш хут сцена çине тухсан питĕ хумханнăччĕ. Сан çине пĕтĕм халăх куçран пăхать. Эп пурпĕр çухалса каймарăм, хама алăра тытрăм та лăпланса юрларăм. Пăлханни иртсе кайрĕ. Пурне те килĕшнĕ эп купăспа каласа юрлани ун чух. Малтанласа йăнăшасси вăл пурин те пулать, çавăнтан вĕренен, аталанан. Çулсем иртсен опыт та, ăсталăх та хушăнать. Çĕннине шыратăн, хăнăхса пыратăн, шанчăклăрах тытатăн хăвна.

**– Кашни çын пурнăçра телейлĕ пулмалла. Эс телейлĕ çын-и?**

– Телейлĕ эпĕ, мĕншĕн тесен ал- ура пур, куç курать, хăлха илтет.

Вĕрентсе ăс-тăн панăшăн вĕрентекенсене тав тăвас килет. Çаплах аттепе аннене пурнăç панăшăн, ура çине тăратнăшăн. Пурнăçра пуçа усмалла мар, çавна пĕлетĕп. Çумра яланах пулăшса пыракан, тĕрев паракан çын пулмалла тетĕп. Йывăр чух эрех-сăрапа, сиенлĕ йăласемпе айкашмалла мар, хăвăнтан ытларах пăрса ярса урăх ĕç тумалла. Манăн физрук Иван Петрович Сабаев пулнă, тав сăмахĕ калатăп ăна спортпа туслă пулма вĕрентнĕшĕн.

**– Тавах калаçушăн, вăхăт тупса хуравлама килĕшнĕшĕн. Ăнăçу сунатăп сана, çĕнĕ юррусене малашне те итлесе савăнасчĕ-ха пирĕн.**

– Тавтапуç!

**Юрий АДЪЮТАНТОВ** калаçнă.
Çĕпрел районĕ,
Çĕнĕ Упи.
**Н.Сидоров** архивĕнчи сăнўкерчĕк.

КАМА ЛЕШ ЕНЧЕ

## КАШНИ 3-МĔШ АВТОБУС – ПИРĔН

«Раççейри кашни виççĕмĕш автобус «КАМАЗ» компани кăларни. Рынокри электробуссенчен 96 проценчĕ те пирĕн», – тенĕ заводăн генеральнăй директорĕн сутлăхпа сервис енĕпе çумĕ, пассажир транспорчĕн блокĕн ертўçи Руслан Козадаев нумай пулмасть иртнĕ Клиент кунĕнче. 120 çынпа пĕрле производствăна çитсе хăйсен ĕçĕпе паллаштарнине хыпарлать предприятин пресс-служби. Руслан Козадаев сăмахĕсемпе, 2025 çулта Мускав урамĕсене кăна Çырчаллинче кăларнă 400 электробус тухмалла.

## ÇАМРĂК МОРЯКСЕН КЛУБĔ: ПУЛАТЬ Е ÇУК?

Çырчалли хулинчи «Навигатор» парус шкулĕн ертўçи Сергей Коршиков çак вырăнтах хулари ачасем валли çамрăк моряксен клубне туса хурас шутлă. «Ачасем ун чух хулипех килĕччĕç, хăшĕ кимĕпе, хăшĕ кайтпа интересленĕччĕ. Вĕренсе тренировкăсем ирттермесен усси сахал», – тет вăл chelny-biz.ru сайта панă интервьюра парус шкулĕ çуллахи сезонра кăна ĕçлени çителĕксĕррине палăртса. Вăл сĕнекен социаллă проектăн шухăшĕ аван кăна мар, çав тери кирлĕ те пек ĕнтĕ. Çитменнине Сергей Коршиков строительство валли укçа та ыйтмасть, мĕншĕн тесен пулас клубăн проекчĕ унăн хатĕр, инвесторĕ те пур, анчах хула администрацийĕ паллă мар сăлтавсене пула халĕ те ирĕк памасть-ха. Chelny-biz.ru сайт хыпарĕ тăрăх, сăлтавĕ хула тата тўлевлĕ «Урман» пляжсен варринчи «Навигатор» парус шкулăн вырăнĕ коммерцилле проектсем валли илĕртўллипе çыхăнма пултарнă.

## МИÇЕ ВĔÇЕН КАЙĂК?

Çуллен октябрĕн пĕрремĕш канмалли кунĕнче Раççейре вĕçен кайăксене шута илеççĕ. Çав кун волонтерсем ку е вăл территорире вĕçен кайăксене сăнаса даннăйсем пухаççĕ. Унтан ученăй-орнитологсем вĕсем тăрăх вĕçен кайăксен кĕркуннехи миграцине палăртаççĕ.

Кăçал акцие Анат Кама та хутшăннине хыпарлать ntr-24.ru сайт. Биоресурссем енĕпе патшалăх комитечĕн районти уйрăмĕн сотрудникĕсемпе «Экологипе биологи ача-пăча центрĕн» педагогĕсем, Красноключински районĕнчи «Шкул вăрман хуçалăхĕ» пĕрлешĕвĕн çамрăк эковолонтерĕсем Сухаревский сунар хуçалăхĕнчи Акăш кўллинче информаци пухнă. Пĕтĕмпе 300 тĕрлĕ вĕçен кайăка, çав шутра акăша, чайкăна, шăнкăрча тата ыттине шута илнĕ.

СУВАР
32№ (1583) 16.08.2024

ЧĂВАШĂН СУМЛĂ ÇЫННИСЕМ

**Кăçал çуркунне Елабугăна кайсан тĕлĕнмелле илемлĕ çынпа паллашрăм. Сăн-питрен кăна мар, пур енчен те илемлĕ çынпа. Кун йышши тĕлпулусем ĕмĕрлĕхе асра юлаççĕ. Маргарита Дьяченко çинчен сăмахăм. Хăйне тыткалани, калаçни тăрăх хакласан ăна аристократсен çемйинчен теме пулать. Çын çинче сăпайлă та сапăр, хăвна культурăллă тытни пирки кăна пымасть сăмах. Эпир пурте çавнашкал хамăра, çынна хисеплесен. Аристократизм вăл юнра, унпа çуралаççĕ, вăл е пур, е çук, тумтир пек хăв çине уртса яраймастăн ăна. Вăл харпăр хăвна, çынна, обществăна, çынсен хушшинчи хутшăнусене хăйне евĕр йышăнни, хăвна тивĕçлĕ тытни. Аристократизм хăйне уйрăм социаллă сий пулнине пурте пĕлетпĕр. Анчах хăшпĕри çак статуспа çуралмасан та Турри ăна хăйне уйрăм калăпласа ярать пулмалла. Маргарита Поликарповна çавăн йышшискер. 83 çулпа пырать пулин те илемлĕ сăнне пач та çухатман.**



М.П.Дьяченко çамрăк чух...



... тата халь.

# УЧИЛИЩĔРИ ЧИ ХИТРЕ ХĔР

## Вуншар пикерен Александр Дьяченко Маргаритăна суйласа илнĕ

Тивĕçлĕ канăва милици майорĕ пек тухнине пĕлтерсен тата ытларах тĕлĕнтĕм. Çепĕçскере ытларах артист е юрăç профессийĕ килĕшӳллĕ пек. Йăнăшман иккен. Маргарита Поликарповна хăй пурнăçне чăнахах культура сферипе çыхăнтарма шутланă малтанласа. Елабугăри культурăпа çутĕç училищине вăл Чăваш Енри Çĕрпӳрен вĕренме килнĕ. Вĕренме кĕнĕ хĕр, йăлт шутланă пек пулса пынă. Пĕррехинче милици сотрудникне тĕл пуличчен...

Çамрăк качча училище йĕркеленĕ ташă каçне ятарласа килнĕ пулать. «Чи хитре хĕре тупатăп та паянах авланса яратăп», – çапла пулнă унăн тĕллевĕ. Чи хитри, паллă ĕнтĕ, Маргарита пулнă. Çак самантран унăн пурнăçĕ йăлт улшăнать. Çапах йĕркипе. Çак тĕлпулура эпир унăн хĕрĕпе Алена Александровнăпа та паллашрăмăр. Вăл каласа панă те ĕнтĕ амăшĕн тĕлĕнмелле историне.

### Вăрçă вăхăтне тивнĕ ачалăх

Маргарита Поликарповна 1939 çулта Çĕрпӳре Игнатьевсен çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ Поликарп Игнатьевич вăрçă пуçланнă чух районти потребкооперацире ĕçленĕ. Тылра кирлĕ çын тесе ăна «до особого распоряжения» тесе бронь та панă, анчах çакăнпа усă курас темен Поликарп Игнатьевич. Вăрçăн пĕрремĕш кунĕсенчех фронта яма ыйтса заявлени çырнă. Çапла вăл пехота шутĕнче Тăван çĕршыва хӳтĕлеме тухса кайнă. Фронта каяс умĕн иккĕри хĕрпĕрчине темĕнччен аллинчен ямасăр тытса тăнă. Чунĕ сиснĕ пулĕ юлашки хут курнине. 1943 çулта унпа çыхăну татăлать, виç кĕтеслĕ çырусем килме пăрахаççĕ. Почтальон малтан ашшĕ хыпарсăр çухалнă текен хута килсе парать. Ун хушамачĕ вилнисен хушшинче те, чĕррисен хушшинче те пулман. Маргарита Поликарповнан амăшĕ мĕн виличчен унран хыпар кĕтнĕ, халĕ унăн мăнукĕ те кукашшĕ çинчен мĕн те пулин тупма ĕмĕтленсе пурăнать.

Маргарита Поликарповна ун чух иккĕре кăна пулин те ашшĕне астунине калать. «Кашни çул, май уйăхĕ çитсе пынă май эпĕ ачалăхри самантсене уççăнрах аса илме тытăнатăп. Хама ватă асатте чĕрçи çинче ларнине, çумра йĕрсе тăракан аннене тата палламан çынсене астăвап. Аттене – кăштах кăна. Ун чухне эпир ăна фронта ăсатнă иккен. Урăх эпĕ ăна курман», – тет Маргарита Поликарповна.

Çапла Поликарп Игнатьев ытти миллион совет салтакĕ пек тăван çĕре хӳтĕлесе пуç хунă. «Тăвансем каласа панинчен кукаçей питĕ те тӳрĕ кăмăллă, ырă çын пулнине пĕлетĕп. Потребкооперацире те вăл «числă ĕçленĕ», – каласа парать Маргарита Поликарповнăн хĕрĕ Алена Чернова.

Вăрçă çулĕсенче пĕчĕк Ритăна кукамăшĕпе кукашшĕ пăхнă, апат-çимĕçпе пулăшнă. Анчах ытларах пĕчĕкскере хваттерте тăракан хĕр-студенткăсем пăхнă. Вăрçă пынă пулин те Çĕрпӳре виçĕ профессилле училище ĕçленĕ. Унта ытларах хĕрсем вĕреннĕ, каччăсем вăрçăра пулнă. Ритăн амăшĕ ирпе ирех окоп чавма тухса кайнă та сĕм çĕрле тин таврăннă. Пĕчĕк хĕрĕ валли пĕçернĕ çĕрулмипе пĕр курка сĕт хăварнă. Рита вара çывăрса тăрсан тӳрех урама чупса тухса эвакуаципе килнĕ ача-пăча килессе сăнаса тăнă. Амăшĕсемсĕр юлнăскерсем выçлăха çĕнтерме тем те пĕр шутласа тупнă. Ленинградран килнĕ Ким ятлă арçын ача салтаксен столовăйĕ патне ертсе кайма пуçланă. Тĕпел патĕнче дежурствăра тăракан салтак ачасем валли çăкăр татăкĕсем, пăтă, пĕçернĕ пахча çимĕç йăтса тухса панă. Çурма выçă ача-пăчана çапла кашни кун тенĕ пек çитерсе тăнă. Пĕчĕк аллипе çăкăр татăкĕпе писнĕ хĕрлĕ чĕкĕнтĕр е çĕрулми чăмăртаса Рита пĕтĕм вăйран килнелле чупнă. Мĕн панине йăлт çисе ярасран хăраса вăл килнине комод çине çӳлерех пуçтарса хунă – амăшĕ валли.

– Кукамай йывăр ĕçрен таврăнсан анне савăнса çак «трофейпе» амăшне хăналанă. Анчах кукамай хĕрĕн çăкăрне нихçан та çимен, çием пекки кăна тунă. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн чĕпĕтсе аннене çитернĕ... Ун чухне анне пиллĕкре кăна пулнă-ха. Хулана лайăх пĕлсе те çитеймен. Пĕррехинче вăл выляса çӳресе çухалса каять. Пĕчĕкскер палламан хапхасем умĕнче ĕсĕклесе йĕрсе тăрать. Макăраканскере иртен-çӳрен милици участокне кӳрсе ярать. Кунта шăпаллă тĕлпулу пулса иртет темелле. Кабинетра аннене милици формине тăхăннă çамрăк хĕрарăм ыталаса илет, йăпатса лăплантарма пуçлать. Берет тăхăннă хитре хĕрарăм аннене те килĕшнĕ ахăр, йĕме чарăнать те хăй пĕлнĕ сăвăсене каласа пама тытăнать. Такмаксем тата хĕрлĕ çар пирки юрă та юрласа парать. Хăй пирки вара çурт номерне тата амăшĕн ятне çеç калама пултарать. Тем вăхăтран амăшне шыраса тупаççĕ. Кам шутланă ун чухне тепĕр çирĕм çултан ман анне милици формине тăхăнасса? Хăй ĕмĕрĕн 38 çулне йĕрке хуралĕн ĕçне парасса? Çăмăл пулман вăрçă ачисен ачалăхĕ. Анне кукамая кĕте-кĕте йĕнине, таçтан пĕрре иртсе каякан машинасен мĕлкисенчен, тĕрлĕ шăв-шавран хăранине аса илсе каласа паратчĕ. Халĕ хăй йĕнине илтсе Малышка ятлă качака пӳрте кĕнине кулса асăнать. Çав çулсенче январь хăй сĕчĕпе тăрантарса çăлса хăварнă-çке çемьене... Малышка чĕрчун-анне туйăмĕпе ача хуйхине сиссе пӳрте кĕнĕ пулмалла. Амăшĕ киличчен вăл качака çумне кĕрсе выртса çывăрнă, – иртнине асăнса куççульленет Алена Александровна.

Çĕнтерӳ кунĕсене питĕ лайăх астăвать Маргарита Поликарповна. Эрне уявланă Çĕрпӳре Çĕнтерĕве. Амăшĕ ăна шурă алшăллирен кĕпе çĕлесе парать. Савăннăскер вăл ун чухне татăлса йĕрекен амăшне ăнланса та пĕтереймен. Ытти çемьесенче вăрçăран таврăннă мăшăрĕсене, ывăлĕсене кĕтсе илнĕ е вилнисене асăннă. Вĕсен вара паллă марлăх. Çапла хĕрача ашшĕ юратăвĕпе хӳтлĕх мĕнне пĕлмесĕрех ӳсет.



Маргарита Поликарповна (сылтăмра) ĕçтешĕсемпе.

### Завода юрлама чĕннĕ

1947 çулта Рита шкула каять. Амăшĕ ăна кукамăшĕн ăшă кофтинчен кĕпе çĕлесе парать, инçетри тăванĕсенчен пушмак лекет, портфель вырăнне пусмаран çĕленĕ сумка. Букварь класа пĕрре пулнă. Хутпа кăранташ учитель салатса панă. Кашни кун ачасене кишĕр сокĕпе пĕр катăк сахăр панă. Рита пултаруллă пулни ачаран палăрма пуçланă. Вăл концертсене хутшăнма, чунтан юрлама тытăннă. Пĕр япала çеç пăшăрхантарнă, вĕренме те, концертсенче юрлама та пĕр кĕпе çеç пулнă. Амăшĕ шурă çипрен çухавасем çыхса илемлетме тăрăшнă, кофтисене тĕрлесе тăхăнтартнă. Тумтире хитрелетсе тăхăнасси Маргарита Поликарповнан ачалăхранах юлнă. Амăшне килте тĕрлĕ чечек ӳстерсе, урай сармаллисем, чӳрече чĕнтĕрĕсем çыхса савăнтарма тăрăшнă. Пĕррехинче вăл тин çеç чечек çурнă килти розăн çеçкисене татса пĕрене хушшисене чиксе тухнă. Амăшĕ вăрçса та илнĕ кăштах çакăншăн. Ашшĕ вăрçă кайиччен кăна çурт лартнă пулнă. Тĕл-тĕл мăкласа та ĕлкĕреймен. Вăт Рита хăйне май илемлетме тăрăшнă çурта.

*(Вĕçĕ çитес номерте).*

**Ирина ТРИФОНОВА.**
**И.Кузьмина** тата **А.Чернова** архивĕнчи сăнӳкерчĕксем.

podpiska.pochta.ru

ТĔЛПУЛУ

**Нумай пулмасть чăваш писателĕсемпе библиотекарĕсем, Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕн çумĕ Ольга Федорова Шупашкарти ача-пăча библиотекинче Нахчыванри М.Т. Сидги ячĕллĕ пукане театрĕн директорĕпе, Азербайджан халăх артисчĕпе Ширзад Абуталыбовпа тата ача-пăча писателĕпе, драматургпа Вугар Хагвердиевпа тĕл пулчĕç.**


Чăваш халăх поэчĕ Раиса Сарпи хăнасемпе.

# ПĔР ТĔЛЛЕВЕХ ПУРНĂÇЛАÇÇĔ

## Чăваш çыравçисем Азербайджанри ĕçтешĕсемпе тĕл пулчĕç

Хăнасене библиотекăн ертӳçи Татьяна Вашуркина кĕтсе илчĕ. #ЗнайЧитай ача-пăчапа çамрăксен вулавĕн лабораторийĕн ертӳçи Наталья Степанова вĕсене вырăс, чăваш халăхĕсен пурнăçĕпе, йăли-йĕркисемпе паллаштарчĕ. Азербайджанри ĕçтешĕсемпе чей ĕçнĕ май çыравçăсен калаçăвĕ литература, пултарулăх тавра пычĕ.

Ольга Федорова Чăваш кĕнеке издательстви ĕçĕпе паллаштарчĕ. 2017 çулта издательство Бакура иртнĕ V Халăхсен хушшинчи кĕнеке курав-ярмаркkине хутшăннине каласа пачĕ. Ун чух пирĕн кăларăмсем азербайджансене питĕ интереслентернĕ. Тепĕр çултан Чăваш кĕнеке издательствинче азербайджан ача-пăча сăвăçин Ханимана Алибейлин «Эльхан – Чăваш çĕршывĕнче» кĕнеки (чăвашла Раиса Сарпи куçарнă) пичетленсе тухнине асăнчĕ. Унтан хăнасене хула юбилейĕ тĕлне кăларнă «Чебоксары. Шупашкар» кĕнеке-альбома издательство ятĕнчен парнелерĕ.

Сергей Павлов çыравçăн «Суд» кĕнекине совет самани вăхăтĕнче азербайджанла куçарса пичетленĕ пулнă. Кун çинчен çыравçă мăнаçланса аса илчĕ.

Светлана Гордеева вара Чăваш Республикин Писательсен союзĕ, унта темиçе секци ăнăçлă ĕçленине каласа пачĕ. Чи хастарри Ольга Федорова ертсе пыракан ача-пăча литературипе çамрăк авторсемпе ĕçлекен секци пулнине палăртрĕ. «Пирĕн çыравçăсен тĕллевĕ – çамрăк вулакансене тăван чĕлхепе кăсăклантарасси, çавăнпа Чăваш кĕнеке издательстви кĕнекесене час-часах икĕ чĕлхепе, чăвашла тата вырăсла, кăларать. Çыравçăсем пĕр-пĕрин произведенийĕсене вырăсларан – чăвашла, чăвашларан – вырăсла куçараççĕ», – терĕ вăл тĕп тĕллеве палăртса. Ĕçтеш-хăнасене Николай Ижендейĕн хăй вырăсла куçарнă «Чĕвĕлпи. Щебетунья» кĕнекине тата хăй илемлетнĕ «Буквы в букете» ачасен сăввисен пуххине парнелерĕ.

ЧР халăх поэчĕ Раиса Сарпи Азербайджанпа тата Ханимана Алибейли сăвăçпа мĕнле паллашнине аса илчĕ: «Валентина Эльпи паллă çыравçă мана пĕррехинче: «Эпĕ Азербайджанăн çав тери лайăх ача-пăча писателĕпе кантăм. Халĕ вăл 5-ри мăнукĕпе Эльханпа Чăваш Енре хăнара. «Силпи» пултарулăх çуртĕнче канаççĕ. Вăл кунта чух пĕр-ик сăввине те пулсан çав тери пичетлеттерес килет»,– терĕ Атăл леш енне хăнана пыма чĕнсе. Çапла паллашрăмăр сăвăçпа. Кĕçех «Пионер сасси» хаçатра тăватă сăвви пичетленчĕ. Сăввисем çав тери килĕшрĕç. Çулсем иртсен хам «Путене» ача-пăча журналĕн редакторĕ пулсан, унăн сăввисен ярăмнех пичетлерĕм. Пĕтĕмпе 30 сăввине куçартăм, анчах кĕнекене пуртех кĕреймерĕç», – терĕ.

Азербайджан обществипе туслă çыхăнусене Ара Мишши те аса илчĕ.

Вугар Хагвердиев азербайждан чĕлхипе тухнă хăйĕн кĕнекине çыравçăсене парнелерĕ пире. Нахчыванри М.Т. Сидги ячĕллĕ пукане театрĕн директорĕ Ширзад Абуталыбов: «Эпир пĕр тӳпе айĕнче пурăнса çитĕнекен ăрусемпе çыхăннă пĕр ыйтусенех татса паратпăр. Литературăпа искусство чăнах та нацисене чăмăртама пултараççĕ»,– терĕ хăйсене çапла ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн тав туса.

**Любовь ЛЕВАЦКАЯ.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

КĔНЕКЕ ÇӲЛĔКĔ




**Нумаях пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче Яков Гаврилович Ухсайăн «Кĕслеçĕпе упа» кăларăмĕ пичетленчĕ. Пирвайхи хут вăл 1954 çулта тухнă пулнă.**

# «КĔСЛЕÇĔПЕ УПА»

## Сăвăлла юмахсемпе паллаштаракан кĕнеке

Яков Ухсай чăваш халăх поэчĕн ятне илтмен чăваш çук та пуль. Унăн хайлавĕсене шкул программине кĕртнĕ, ачасем вĕсене мĕн пĕчĕкрен вуласа ӳсеççĕ. Вăл е ку произведение тĕрлĕ вăхăтра тепĕр хут тишкерсен те хăвна валли мĕн те пулин усăлли, кирли тупатăнах, мĕншĕн тесен вĕсенче халăх ăс-хакăлĕ, йăли-йĕрки, пуян сăмахлăхĕ упранать.

Чăваш кĕнеке издательствинче Яков Гавриловичăн «Кĕслеçĕпе упа» кăларăмĕ пичетленсе тухрĕ. Ăна пухса хатĕрлекенĕ – пултаруллă çыравçăн хĕрĕ Ольга Ухсай, ӳнерçи – Татьяна Бурдина, редакторĕ – Ольга Иванова. Тиражĕ – 1000 экземпляр.

Кĕнекене виçĕ хайлав кĕнĕ. Ку сăвăлла юмахсем малтанхи хут 1954 çулта «Кĕслеçĕпе упа» кăларăмра кун çути курнă. Вĕсенче автор ĕмĕрхи темăсене хускатнă: пуян пурнăçпа чухăнлăх, ырă кăмăллăхпа чунсăрлăх, тавçăрулăхпа айванлăх… Сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕ урлă çыравçă çынсенчи çитменлĕхсене питлет, ултавçăсене тăрă шыв çине кăларать.

«Юман чукмар» чухăн ватăсемпе тата вĕсен Иван ятлă ывăлĕпе паллаштарать. Çăрттан пулăшăвĕпе усă курса яш ача ашшĕ-амăшĕн тата хăйĕн пурнăçне тĕпрен улăштарма пултарать. Чустаран унанă паттăр ĕмĕтленсе кăна илет – Сахрун купса çĕлĕкĕ, Ваçлей пуян кĕрĕкĕ унăн пулса та тăраççĕ. Иван хăйне кăна мар, ашшĕ-амăшне те савăнтарасшăн-ха. Эппин, каллех пулла чăрмантармалла. Хайлав мĕнпе вĕçленнине пĕлес тесен вара кĕнекене алла тытмалла.

«Автан ылханĕ» сăвăлла юмах ют пурлăха хапсăнни инкек патне илсе çитернине кăтартса парать. Мучипеле кинемейĕн сар автанĕ пĕррехинче ылтăн куркапа кĕмĕл кашăк тупать. Тайкаланчăк кивĕ пӳрт вырăнне ватăсен çĕнĕ çурт-йĕр илмелли пирки шухăшлама пуçлать килти кайăк, анчах тупрана улпут çаклатса тарать. Автан пуяна ылханать, канăç памасть. Лешĕ кайăка тĕп тума шут тытать, тулĕк сар автан кашнинчех пăтăрмахран хăтăлса тухать. Улпут пурпĕр юп курса пурăнаймасть.

«Кĕслеçĕпе упа» хайлаври Микуç пичче пасартан таврăннă чухне вăрманта тунката çине канма ларать. Кĕсле каласа пăхас тени ăна кĕтмен тĕлпулу парнелет.

*Сĕм вăрманăн утаманĕ*
*Урипе çупа-çупа*
*Сикнине эсир курман-и?*
*Пултарать иккен упа.*

Мĕнпе вĕçленĕ-ши ку çулçӳрев? Микуç пичче яла мĕнле çитĕ-ши?

**Ольга АВСТРИЙСКАЯ.**

podpiska.pochta.ru

# КАШНИ ÇАВРĂМРА ТУСЛĂХ

2024
ГОД СЕМЬИ
ÇЕМЬЕ ÇУЛТАЛĂКĔ

*(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).*



Уяв каçне Тутарстан Премьер-министрĕ Алексей Песошин уçрĕ. Вăл пурне те Халăхсен пĕрлĕхĕн кунĕпе саламларĕ. Çĕршывра пурăнакансен хăйнеевĕрлĕхĕ – пĕр чăмăра пуçтарăнса çĕршывшăн кар тăма пултарнине тесе шутлать вăл. «XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче те çапла пулнă, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче те, халĕ ятарлă çар операцийĕ пынă чух та çаплах. Тĕрлĕ халăх çыннисем, тĕрлĕ тĕн конфессине тытса пыракансем ума пĕр тĕллев лартса хастарлăх, паттăрлăх кăтартаççĕ. Тылра гуманитари пулăшăвĕ хатĕрлекенсем, çарти ентешĕсене пулăшакансем чăннипех хастарлăх кăтартаççĕ. Историрен лайăх пĕлетпĕр, халăхсем пĕрле пулсан нимĕнле тăшман та çĕнтереймест пире – пĕрле эпир вăй», – терĕ вăл.

Алексей Валерьевич республикăра халăх илемлĕ пултарулăх коллективĕсене аталантарма, Тутарстанра пурăнакан нацисен культурисене упрама условисем туса парасси яланах приоритетра пулнине палăртрĕ. Тутарстанри халăхсен килĕшĕвĕшĕн тăрăшакансене республика наградисене пачĕ.

Çакăн хыççăн вĕçĕ-хĕррисĕр илемлĕ ташăсем, юрăсем уяв каçне малалла тăсрĕç. Çулран çул «Пирĕн кил – Тутарстан» фестивале республикăри районсем йышлă хутшăнаççĕ. Ăна 2012 çулта Тутарстан Республикинче пурăнакан халăхсен пĕрлĕхне, килĕшĕвне упрас тĕллевпе, туслăхне çирĕплетессишĕн пуçарнă. 13 çул хушшинче фестивальте 30 пин ытла çын хутшăннă. Кăçал 433 заявка йышăннă йĕркелÿçĕсем. Гала-концертра 31 муниципаллă районтан илемлĕ пултарулăх коллективĕсем сцена çине тухрĕç – 1,5 пин çын. Чăваш культурине оперăпа балет театрĕн сцени çинчен Çырчаллинчи «Чĕкеç» (ертÿçи Елена Кондюкова) фольклор ансамблĕ кăтартрĕ.

Концерта профессиллĕ артистсем те хутшăнчĕç – РФ тата ТР халăх артистки Венера Ганеева, ТР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Г.Тукай ячĕллĕ премин лауреачĕ Миляуша Таминдарова ертсе пыракан ТР патшалăх камерлă хорĕ, Дмитрий Железнов ертсе пыракан арçын ачасен хорĕ. СВО ветеранĕсем «Добробат» (ертÿçи Валерий Чамрин) ансамбль йĕркеленĕ. Вĕсене залра ларакансем питĕ ăшшăн йышăнчĕç, темĕнччен алă çупса тав турĕç.

Фестивале йĕркелекенсем 2024 çул Раççейре Çемье çулталăкĕ пулнине асрах тытнă – тутар, чăваш, вырăс, удмурт, мари, мордва халăхĕсенчен пĕрер пултаруллă çемье сцена çине тухса «Отчий дом» (авторĕсем Евгений Мартынов, Андрей Дементьев) юрă юрларĕç. Чăваш наци çемйине Чаркинсем кăтартрĕç. Сергейпе Сильвия Чаркинсем хĕрĕсемпе Софияпа Стефания чăн-чăвашла тумланса тухрĕç.

Уяв концерчĕ пурте лайăх пĕлекен юрăсене пĕрле караоке юрланипе вĕçленчĕ.

**Татьяна ВАСИЛЬЕВА.**
«Татар-информ» ИА сăнÿкерчĕкĕ.

# ХАЛĂХСЕМ НУМАЙ – ÇĔРШЫВ ПĔРРЕ

## «Пысăк этнографи диктантне» ноябрĕн 1-мĕшĕнчен çырма пуçларĕç

**Этнографи диктанчĕн историйĕ 2016 çулта пуçланнă. Пĕрремĕш хут йĕркеленĕ чухнех ăна Халăхсен пĕрлĕхĕн кунĕ умĕн ирттерме йышăннă. Пĕрремĕш çулах çĕршывĕпе 90 пин ытла çын хутшăннă. Çулран-çул диктант çыракансен шучĕ ÿссех пырать. Пĕлтĕр, тĕслĕхрен, Раççейĕпе илсен 13 миллион ытла çын хутшăннă ку акцие.**



*Е.Ефимов, А.Терентьев.*



*Диктант çырнă самант.*

Диктант тесе калатпăр, анчах вăл формипе анкетăна аса илтерет. 16 çула çитменнисем – 20, çитĕннисен 30 ыйтуран тăракан диктанта 45 минутра хуравласа ĕлкĕрмелле. Çĕршыври халăхсен историйĕпе, культурипе, йăлипе çыхăннă ыйтусем. Кашнин çине хуравăн тăватă вариантне çырнă, хăвăр тĕрĕс тесе шутлаканнине суйласа илесси çеç юлать сирĕн. Диктанта хутшăннисене сертификат параççĕ.

Этнографи диктанчĕ ноябрĕн 8-мĕшчен пырать. Ăна офлайн (чылай çĕрте ноябрĕн 2-мĕшĕнче ирттерчĕç) тата онлайн miretno.ru сайтра регистраци иртсе çырма пулать. Сертификатне каярах хăвăр кăтартнă электронлă почтăна ярса парĕç.

Тутарстанра этнографи диктантне çыракансем кашни çулах йышлă. Пĕлтĕр 46 пин ытла çын хутшăннă, кăçал ку цифра ÿсесси пирки иккĕленмесçĕ йĕркелÿçĕсем.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче Хусанти Халăхсен Туслăх Çуртĕнче ирттерме йышăннă диктанта. Хула пысăккине кура темиçе тапхăрпа иртет – 12.00 – 17.00 сехетсенче. Чи малтанах 11 сехетре пуçланчĕ. Унта ертÿçĕсем, наципе культура автономийĕсен ертÿçисем хутшăнчĕç. Федераци Канашĕн пайташĕ, Тутарстан Республикин РФ Патшалăх Думинчи сенаторĕ Александр Терентьев тата ТР Раисĕн Шалти политика ыйтăвĕсемпе департаменчĕн Наци политикине реализацилессипе управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Евгений Ефимов пухăннисене саламларĕç. Этнографи диктантне çырма хутшăнни тавракурăма ÿстернине, юнашар пурăнакан халăхăн культурипе, йăли-йĕркипе ытларах интереслениме хавхалантарать тесе пурне те диктант çырма чĕнчĕç.

Диктант çырма ТР Патшалăх Канашĕн Вĕрентÿ, наука, культура тата наци ыйтăвĕсен комитечĕн председателĕн çумĕ Ирина Терентьева, ТР çамрăксен ĕçĕсен министрĕн çумĕ Айгуль Сабирова, Хусанти патшалăх медицина университечĕн ректорĕ Алексей Созинов, Тутарстан Халăхсен ассамблейин Ĕçтăвкомĕн ертÿçи Ренат Валиуллин, «Таткультресурсцентр» ертÿçи Алсу Мифтахова тата наципе культура обществисен ертÿçисем хутшăнчĕç.

**Татьяна ТАРАСОВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕсем.

**Çыншăн çемье мĕн вăл? Çемье – кил, аттепе анне, пĕртăвансем... Вĕсем пурте, ӳссе çитсен те, пĕрле пуçтарăнаççĕ, савăнăçра савăнаççĕ, хурлăхлă кунра пĕрле кулянаççĕ, килти ĕçсене те пĕрле ĕçлеççĕ. Ку юрату та телей. Çемье вăл – пĕтĕм пурнăçăн никĕсĕ те, тымарĕ те...**

# ТĔНЧЕ ШАЙĔНЧИ СУДЬЯ

## Чăваш наци кĕрешĕвне йĕркелесе яракан Виталий Васильев çак кунсенче юбилейне паллă тăвать

2024 ГОД СЕМЬИ ÇЕМЬЕ ÇУЛТАЛĂКĔ

### Ашшĕн тĕслĕхĕпе

Пĕр-пĕрне килĕштерсе, юратса пурăнакан çемьере ачасем те йышлăн çуралса ӳсеççĕ. Акă, тĕслĕхрен, Чăваш Енри Аслă Елчĕк ялĕнче пурăнакан Васильевсен çемйине кăна илер. Петр Моисеевичпа Ольга Ивановна (хĕр чухнехи хушамачĕ Петькова) çемйинче ултă ача çуралса ӳснĕ – икĕ хĕрпе тăватă ывăл. Чи аслипе кĕçĕнни хĕрсем – Шурапа Надя. Çемье хуçисем иккĕшĕ те тăван колхозра вăй хунă: Петр Моисеевич ДТ-54 тракторпа ĕçленĕ, Ольга Ивановна хирте пахча çимĕç ӳстернĕ. Вĕсен ачисем те хăйсем пекех мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхса ĕçчен пулса çитĕннĕ.

Аслă хĕрне, Шурана, 1958 çулта çуралнăскере, кил-çурта тытса пыма, ашшĕпе амăшне пулăшма ытларах лекет. Вăл çемьери ытти ачасене пăхса ӳстерме пуринчен ытла пулăшнă ашшĕпе амăшне. Аппăшĕн юратăвĕ çемьери виççĕмĕш ачана – Виталие – лекнĕ пулас. Вăл 1964 çулхи августăн 13-мĕшĕнче, колхозра вырма ĕçĕсем пынă вăхăтра çуралнă.

«Лаша пуласси тихаран паллă», – теççĕ. Виталий мĕн пĕчĕкрен сăпай та харсăр ӳснĕ. Ялти ытти ачасем пекех шкула çӳреме пуçласан та, вăл пĕр вырăнта ларса тăра пĕлмен, яланах аслисене пулăшма тăрăшнă. Уйрăмах ашшĕ çумĕнче пулнă – хирте унпа пĕрле тракторпа ĕçленĕ. Ашшĕ хĕсметре Венгри çĕршывĕнче танкист, йывăр танк «ИС-3» çинче механик-водитель пулнă. Будапешт хулинче 1956 çулта пăлхану вăхăтĕнче вĕсен чаçне çак хирĕçĕве кĕртнĕ. Приказ тăрăх пирĕн салтаксен пеме юраман, пăлханакан ушкăна кăна лăплантарма пулăшмалла пулнă. Анчах та леш енчен вăрçăри пекех пур енĕпе те пеме пуçланă. Васильевсен танкĕ малти ретре пынине кура, вĕсен танкне персе юрăхсăра кăларнă. Тăватă çынран тăракан экипажран Петяпа грузин ачи кăна сывă юлнă, иккĕшĕ вилнĕ. Механик-водитель аманнă, контузи илнĕ. Çар чаçĕнчен ăна инвалида кăларса хĕсметрен килне ярасшăн пулсан та вăл килĕшмен, хĕсметрен виçĕ çултан тин тăван килне таврăннă. Ялта пурăнма пуçласан та паттăр салтак спортпа туслă пулнă. 1961-1962 çулсенче Чăваш Енре кире пуканĕ йăтакансен ăмăртăвне хутшăнса икĕ хутчен чемпион пулса тăнă. Çавăнпа та Виталий ашшĕпе мухтаннă, ун пек пулма, яланах ашшĕ çумĕнче пулма тăрăшнă.

### Шкултах хастар пулнă

Виталий 7-мĕш класра вĕреннĕ чухне хăй ирĕкĕпе комсомола кĕнĕ. Хастар ачана шкулти Комсомол комитетне спорт енĕпе ĕçлеме суйланă, мĕншĕн тесен вăл мĕн пĕчĕкрен, ашшĕне кура, спортпа туслă пулнă.

9-10 класра вĕреннĕ чухне Виталий Васильева шкулта йĕркелĕх тытса пыма ЮДМа (юный дружинник милиции) ертсе пыма суйланă. Тĕлĕнмелле, ун чухне шкулта 400 яхăн ача вĕреннĕ, Виталий пуринпе те пĕр чĕлхе тупса шкулта тирпей тытса тăма пултарнă. Вăл вăхăтра шкулта спортпа туслисем те нумайăн пулнă. Виталий яланах шкулти, районти, республикăри тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнса, ашшĕ пекех, малти вырăнсене çĕнсе илнĕ.

1981 çулта ялти вăтам шкула пĕтерсен Виталий малалла вĕренме кайма шутлать, анчах та юлашки вăхăтра ашшĕ чирлекелесе тăнине пула ку ĕмĕте пăрахăçласа колхозра «Беларусь» тракторпа ĕçлеме пуçлать. 1982 çулхи кĕркунне салтака каять, пограничниксен ретне лекет. Ун чухне çак тивĕçе Елчĕк районĕнчен виçĕ ача кăна тивĕçнĕ, вĕсенчен пĕри – Виталий Васильев. Хĕсметре Вăтам Азири Хĕрлĕ ялавлă пограничниксен округне лекет, аслă стрелок, пулеметчик специальноçне алла илет. Ăна çар чаçĕнче те спорт уйрăмĕн ертӳçи пулма çирĕплетеççĕ. «А нука, воин!» спорт конкурсне хутшăнса чемпион ятне çĕнсе илет Аслă Елчĕк каччи. Унăн сăнӳкерчĕкĕ «Лучшие спортсмены части» текен стенд çинче çакăнса тăма тивĕçлĕ пулать. Виталий пограничник пулнишĕн савăнать те, мухтанать те, çавăнпа та пуль вăл чикĕри йывăрлăхсене çăмăллăнах икĕ çул çурă чăтса иртерет...

Виталий Васильев хĕсметрен 1985 çулхи çуркунне кăна таврăнать тăван килне, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра çамрăк салтаксене вĕрентсе хăвармалла пулнă. Яла таврăнсан та хĕсметре пиçĕхнĕ салтак килте канса выртмасть, Шупашкар хулине кайса трактор тăвакан завода ĕçе вырнаçать. Çулталăк хушшинчех 4-мĕш разрядлă специалист пулса тăрать. Ĕçленĕ хушăрах хулари электротехникума вĕренме кĕрет. Диплом илсен те Виталий заводрах ĕçлет.



*В.П.Васильев Çĕпрел районĕнчи Матакри вăтам шкулта ТР Патшалăх Канашĕн депутачĕпе Ш.Ш.Ягудинпа.*



*Виталий Васильев – тĕнче шайĕнчи судья.*

### Лайăх учитель

Спортра та ĕлкĕрет, хулара иртекен ăмăртусене яланах хастар хутшăнса малти вырăнсене йышăнать. Çавна пулах Çĕнĕ Мускаври физкультурăпа спорт техникумне вĕренме кĕрет. Унтах ирĕклĕ енпе кĕрешме пуçлать. Çулран çул техникумшăн ăмăртусене хутшăнса ăсталăха ӳстерсе пырать, спорт мастерĕн кандидачĕ пулса тăрать. Çак вĕренӳ заведенине пĕтерсен Шупашкарти 25-мĕш шкулта физкультура учителĕ пулса ĕçлеме пуçлать. Унăн ачисем хулари тĕрлĕ ăмăртусенче палăрма пуçлаççĕ, ачасене спортпа туслă пулма вĕрентет. Кашни ачапа хăйне евĕрлĕ калаçма пĕлни, вĕрентнĕ чухне чăтăмлă пулни, ачасене юратни яланах уншăн пысăк вырăнта тăнă.

Виталий Петрович каласа панă тăрăх, тулли кĕлеткеллĕ пĕр хĕрачан чупассипе, сикессипе яланах результатсем начар пулнă. Физкультура урокĕнче начар паллă никамăн та илес килмест-çке. Виталий Петровичран маларах вĕрентнĕ учитель çак хĕрачана яланах начар паллăсем лартнă иккен, çакăншăн хĕрача хурланса йĕнĕ. Виталий Петрович вĕрентме пуçласан çак хĕрача спортра хăй вырăнне тупать, вăл йывăр атлетикăпа кăсăкланма пуçлать. Каярахпа хĕрача спорт мастерĕ те пулса тăнă, мĕншĕн тесен Виталий Петрович ачана çапса хуçман, ерипен спортпа туслаштарнă, ăна юратма вĕрентнĕ.

### Ун пек пултăклă çынсем çĕр çинче сайра

Çакăн пек çынна, паллах , Чăваш наци конгресĕнче те пĕлнĕ, ăна спорт енĕпе ĕçлеме чĕннĕ. 1995 çулта Н.И.Петровпа тĕл пулса чăваш наци кĕрешĕвне йĕркелесе янă. Пĕрремĕш ăмăрту Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ. Паллах, ку пурне те килĕшмен. Виталий Петрович тăрăшнипе регионсенче те чăваш наци кĕрешĕвне йĕркелесе яма пуçланă: Ульяновскра, Тутарстанра, Самарăра, Пушкăртстанра, Мускавра, Пермьре... Çав регионсенче иртекен Акатуйсенче те чăваш наци кĕрешĕвĕсене йĕркелесе иртterме пуçланă.

Нумай вăй-хал тăкма тивнĕ В.П.Васильева çак пархатарлă ĕçсене ертсе пыма. Вăл тăрăшнипе çĕршывăн 16 регионĕнчи чăваш наци кĕрешĕвне йĕркелесе янă, ăмăртусем иртterме пуçланă. 300 ытла ăмăртăва хутшăнса судья тивĕçне пурнăçланă.

Виталий Васильев – пилĕке çыхса кĕрешекенсен тĕнче шайĕнчи судйи. Ăна 2013 çулта, Хусан хулинче иртнĕ пилĕке çыхса кĕрешекенсен тĕнче шайĕнчи ăмăртăвĕнче судья пулса ĕçлеме те тӳр килнĕ.

Виталий Петровичăн лайăх енĕсем питĕ нумай, вăл тĕрлĕ вырăнта ĕçлекен, пурăнакан çынсемпе калаçма пĕлет, пĕр чĕлхе тупать. Анлă тавракурăмлă, çивĕч ăс-тăнлă пулнăран пур ĕçе те пĕлсе, тĕплĕ пурнăçлать, ăна ачасем те питĕ юратаççĕ. Вăтăр çула яхăн чăвашлăха, наци кĕрешĕвне аталантарас тесе ĕçлет тата ертсе пырать. Ун пек пултăклă çынсем çĕр çинче сайра. Кĕскен каласан – вăл салтак пекех паттăр та вăйлă çын.

1986 çулта Виталий Çĕрпӳ хĕрĕпе Любăпа паллашать. Вĕсем пĕр-пĕрне килĕштерни малтанхи кунранах палăрать, иккĕшĕ те яланах пĕрле пулма тăрăшнă. Нумай та вăхăт иртмен – хĕрпе каччă туй туса пĕрлешнĕ, икĕ хитре хĕр çуратса ӳстернĕ. Хĕрĕсем Таньăпа Ира та çемьеллĕ ĕнтĕ халь, вĕсен те ачисем пур. Виталийпе Люба кукаçейпе кукамай, вĕсен тăватă мăнук: пĕр ывăлпа виçĕ хĕр.

Çак кунсенче Виталий Петрович 60 çул тултарчĕ. Хаклă çыннăмăра тăван халăхшăн малашне те тăрăшса ĕçлеме, пысăк çитĕнӳсем тума ăнăçу сунатпăр. Эпир унпа мухтанатпăр, вăл пирĕншĕн ылтăнран та хаклă çын, юлташ.

**Виталий МЕРДЕЕВ,**
Чăваш халăх ăс-хакăлĕн тава тивĕçлĕ ăсти.
Автор сăнӳкерчĕкĕсем.

podpiska.pochta.ru